26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ФЕВРАЛЬ
25
КĔÇНЕРНИКУН
45(6282) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 23-мĕшĕнче **Украинăра** пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса **Сумы, Ахтырка, Лебедин** хулисене, **Краснополье** ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, **Нижняя Сыроватка, Верхняя Сыроватка, Боромля** ятлă халăх пурăнакан пунктсемпе чугунçул станцийĕсене тытса илнĕ.

Курск облаçĕнче пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн **Малоархангельск** хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи енеллех çапăçса пынă.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 8 пин тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Февралĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 9 батарейине тата минометсен 6 батарейине пусарса лартнă, тăшманăн пехотине пĕр батальон таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн подразделенийĕсем тăшман тăракан вырăна çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн тăрса çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан тĕреклетнĕ пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли таран выртса юлнă. Пирĕннисем 4 оруди, 16 пулемет, 5 миномет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, Н-ски соединенин чаçĕсем малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр пункта тытса илнĕ чухне нимĕçсен 180 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 2 оруди, 3 транспортер, 11 пулемет, хĕçпăшалсен складне тата боеприпассен складне тытса илнĕ

* * *

Красноармейское районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн хаяр контратакисене сирсе тăнă. Нимĕçсем çав районра танксемпе мотопехотăн йышлă вăйĕсене пухса тăратнă та паха çыхăну линийĕсене каялла тытса илме пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. Пирĕн чаçсем гитлеровецсем хĕснине чарса тăраççĕ, вĕсене пысăк çухату тӳстереççĕ. Пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен 30 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата войскăсем турттарса пыракан 100 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лебедин хули патне пымалли вырăнсенче Н-ски чаçăн боецĕсем тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ пунктне çавăрса илнĕ. Парăнма килĕшмен нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем Лебедин хулине тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çăмăллăн куçакан отрядсем 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. 68 автомашина тата боеприпассемпе тĕрлĕ грузсем тиенĕ нумай лава тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илсе, нимĕçсенчен 3 танк, 5 оруди, 35 автомашина, 70.000 авиабомба, 6.000 снаряд тата 50.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Курскран çурçĕреллерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Малоархангельск районне нимĕçсем йышлă вăйсем илсе пырса тăратса, çав паха пункта кирек мĕн пулсан та хăйсен аллинче хăварма тăрăшнă. Совет чаçĕсем гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕнтерсе те февралĕн 23-мĕшĕнче ирхине Малоархангельск хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ. Противник çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен отрядри партизансем нимĕçсен çар эшелонне персе паровоз бригадине пĕтерсе тăкнă. Никам ертсе пыман поезд станци урлă каçса кайнă та хăвăрт пынă çĕртех хирĕç пыракан эшелона пырса çапăннă. Икĕ поезд пĕр-пĕрне хирĕç пырса çапăннипе вĕсем иккĕшĕ те çĕмĕрĕлнĕ. Украинăри тепĕр районра кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен концентрациллĕ лагерьне сасартăк тапăннă, çав лагерьте тытса хупнă совет гражданĕсем пурăннă. Партизансем вăл лагерĕн хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те унта хупнă çынсене пурне те ирĕке кăларнă.

* * *

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа кăларнă приказне питех те вăйлă çĕкленӳпе кĕтсе илнĕ. Рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ — пĕтĕм совет халăхĕ — массăллă митингсемпе пухусенче Хĕрлĕ Çарăн аслă полководецне Сталин юлташа саламлаççĕ. Ĕççыннисем боецсене тата командирсемпе политработниксене, Хĕрлĕ Çарăн боевой ялавне нихăçан манăçа тухми чапа кăларнăскерсене тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтермешкĕн çирĕп пикĕс хывнăскерсене, юратса ăшă сăмахлă саламсем яраççĕ.

Мускаври инструментсем тăвакан заводра, Белявский юлташ начальник пулса тăракан цехра рабочисем приказа пĕрле пухăнса вуланă. Сталин юлташăн «Тăшмана Совет çĕршывĕнчен массăллăн хăваласа кăларас ĕç пуçланчĕ» тенĕ сăмахĕсене уйрăмах савăнса итленĕ. Слесарь Суворов, нумаях пулмасть Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялавĕн орденне илнĕскер, çапла каланă: «Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем пирĕн хастарлă Хĕрлĕ Çар валли хăрушă хĕçпăшалсем пĕр чарăнмасăр туса кăларса тăраççĕ. Сталин юлташ пирĕн предприятисен ĕçне пысăк хак панă. Малашне те вунă хут вăйлăрах ĕçлесе тăрăпăр. Гитлерла йыт-кĕтĕвĕсене аркатса тăкас ĕçе хăвăртлатма мĕн кирлĕ, çавсене пурне те тăвăпăр», тенĕ.

Подольскри предприятисенчи рабочисем Сталин юлташăн приказĕпе паллашнă хыççăн çапла каланă: «Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем пире хамăр тăван çĕршыва чапа кăлармашкăн ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Сталин юлташ — нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ пĕтмен-ха, вăл халь тин сарăлса, вăйланса пырать-ха, тенĕ сăмахсем пире Хĕрлĕ Сара танксемпе самолетсем тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытларах туса памашкăн тата лайăхрах ĕçлеме хушаççĕ.

Февралĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи енеллех çапăçса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем юханшыв урлă каçнă та темисе меллĕ высотана йышăнса илнĕ, нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Пирĕн войскăсене малалла кайма чарас тесе, нимĕçсем çапăçăва авиацин йышлă вăйĕсене кĕртсе яраççĕ. Совет истребителĕсемпе зенитчикĕсем çĕр çинчи войскăсене хӳтĕлесе пыраççĕ, тăшманăн самолечĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче ĕнер нимĕçсен 35 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем малалла куçса пырса халăх пурăнакан темисе пункта тытса илнĕ. Совет танкисчĕсен группи нимĕçсен 6 орудине тата 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă, 200 гитлеровеца ытла пĕлернĕ.

* * *

Красноармейское районĕнче нимĕçсен 30 танкĕ Н-ски чаçăн позицийĕсене хирĕç контратака тунă. Пирĕн артиллеристсем тӳрремĕн персе тăшманăн 7 танкне пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, нимĕçсен 4 танкне пирĕн бронебойщиксем персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче хăйсен персе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă 11 танкне пăрахса хăварса, гитлеровецсем васкасах хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Украинăра пирĕн войскăсем, Лебедин хулине тытса илсе, малалла кайнă. Совет танкисчĕсемпе мото[изо]ваннăй пехота халăх пурăнакан [пĕ]р пунктшăн пычă çапăçура 300 [ги]тлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. [Тро]фейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 8 противотанковăй орудин, 37 [авто]машина, боеприпассен пысăк [...]ĕ тата хĕçпăшалсен склачĕ. [...] Тепĕр участокра пирĕн боец[...] пирĕн атакăласа тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне тытса [...]

* * *

[...]ан çурçĕреллерехре пирĕн [...] нимĕç оборонин тĕреклетнĕ линине çĕмĕрнĕ те, юханшыв урлă каçса, халăх пурăнакан темисе пункта тытса илнĕ. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен 462-мĕш полкĕн 9-мĕшпе 10-мĕш ротисене тата унтер-офицерсен 90 çынтан тăракан специальнăй отрядне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ровно облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен отрядри партизансем Германирен килнĕ çĕнĕ помещикăн именине аркатса тăкнă. Хуçалăх хуралчĕсене, ялхуçалăх инвентарьне тата тырă склачĕсене çунтарса янă. Тепĕр кунне партизансем тăшманăн поездне ӳпĕнтерсе янă. Крушенире тата чугунçул хуралĕпе хире-хирĕç персе тăнă вăхăтра нимĕçсен 100 çити салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Ворошиловград облаçĕнчи халь ирĕке кăларнă Тиминово ялĕнчи çынсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем совет гражданĕсене ирĕксĕр Германие яни çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «1942 çулхи сентябрьпе октябрьте нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пирĕн ялти 95 колхозникпе колхозницăна Германие каторгăллă ĕçе хăваласа кайрĕç. Гитлеровецсем арçынсемпе хĕрарăмсене мăшкăлласа медицина енчен пăхса тухрĕç. Нимĕçсен улпучĕсем юрăхлă тесе йышăннă çынсене пурне те вĕсем 60 километрти вăлеçмелли пункта çурран хăваласа кайнă. Бандитсем амăшĕсене ачисенчен уйăрнă. Станцире гитлеровецсем халран кайнă, хуйха ӳкнĕ çынсене товарнăй вагонсене персе чикнĕ те питĕрсе лартса Германие, каторгăна илсе кайнă.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тунă преступленисене эпир нихăçан та манас çук. Хамăрăн мĕнпур вăя, мĕнпур средствăсене Хĕрлĕ Çара тĕреклетнĕ çĕре парăпăр, мĕнпур совет çыннисене фашистла пусмăрлăхран часрах ирĕке кăларас тесе, эпир Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кĕрешсе гитлеровецсене пĕтерсе пырăпăр».

* * *

Югославире партизансемпе нимĕçсен тата итальянецсен войскисем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Оккупантсен атакисене сире-сире ярса, партизансем юлашки çапăçусенче 9 танкă пĕтерсе тăкнă, нимĕç тата итальянец салтакĕсемпе офицерĕсене 1.000 çынна ытла вĕлернĕ. Патриотсем трофейăсем тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче 3 югославлă танк пур. Горни Лăпац хули патĕнче пулнă çапăçусенче партизансем итальянецсен пехотин пĕр ротине вĕлерсе пĕтернĕ, пĕр танка тата боеприпассем тиенĕ 4 грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă. 4 миномет, 8 пулемет, 100 винтовка, 30.000 патрон тытса илнĕ.

3 километра 15 минута та 55 секундăра

СЕНТЕР. Йĕлтĕрçĕсен кросĕ пуçланнăранпа районра кроса пурĕ 2.542 çын хутшăннă. Вĕсенчен 2.196-шĕ ГТО тата БГТО значокĕн нормисене панă. Крос пуçланнăранпа пĕр эрне иртрĕ пулин те, хутшăнма тивĕçлисем пурте хутшăнман-ха.

Февралĕн 21-мĕшĕнче кросра малти вырăна йышăнассишĕн ăмăрту пулса иртрĕ. Ку ăмăртăва 12 шкултан 177 çын хутшăнчĕ.

Пĕрремĕш вырăна Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренекен В. Сорокин йышăнчĕ. Вăл 3 километрлă дистанцине 15 минута та 55 секундăра чупса тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна Ильинкăри туллимар вăтам шкулти Г. Казаков 16 минутăра чупса тухса йышăнчĕ. Хĕрачасенчен Юванăвăри вăтам шкулти Е. Тимофеева, Бойкова, Сергеева вĕренекенсем мала тухрĕç. 2 километрлă дистанцие Тимофеева 16 минута та 10 секундăра, Бойкова 17 минута та 25 секундăра, Федушкина 18 минута та 30 секундăра тухрĕç.

С. Давыдова,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ИОСИФ СТАЛИНА

СССР премьерне

Çĕнĕ Кăнтăр Уэльсри лейбористсен совечĕ Хĕрлĕ Çар уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çара хăйĕн саламне ярать. Фашизма çав тери вăйлăн пырса çапнăшăн тред-юнионсем хĕçпăшаллă вăйсене саламлаççĕ. Рабочисен çарĕпе çав тери савăнатпăр. Харькова йышăнса илнине вăрçă историйĕнчи пит паллă çитĕнӳ тесе шутлатпăр. Татăклă çĕнтерӳ тăвас тĕлĕшпе ăнăçлăхсем сунатпăр.

Кинг.
Çĕнĕ Кăнтăр Уэльсри Лейбористсен Совечĕн секретарĕ,
Сидней; Австралия, февралĕн 20-мĕшĕ, 1943 ç.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ,

СТАЛИНА

Аргентинăри демократиллĕ украинецсен ячĕпе, 25 çул тултарнă Хĕрлĕ Çара, тинĕс флотне, авиацие тата вĕсене тăвакана тата ертсе пыракана—аслă, Сталина салам ятратпăр. Ирсĕр тăшман асаплантаракан хамăр тăван çĕршывран эпир инçетре пурăнатпăр, анчах пирĕн чĕресем ăна паттăррăн хӳтĕлекенсемпе пĕрле. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине тĕнчешĕн йывăр килнĕ сехетсенче уявлама лĕкет, анчах цивилизацишĕн уяв кунĕ çитĕ. Пĕтĕм тĕнчери хĕçпăшаллă тăвансем сирĕнтен тĕлĕнсе тăраççĕ. Хамăрăн хаклă Украинăна фашистла пусмăртан кăларакан геройсене пулăшас тĕлĕшпе эпир вăя шеллемĕпĕр.

Украинецсен Совет Союзне пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен демократиллĕ комитечĕ.
Председатель МИСЛЕВЕЦ.
Секретарь ДОБРЯНСКИЙ.
Буэнос-Айрес, Аргентина.

Социализмлă Совет Республикисен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин патне Великобритани королĕ VI Георг янă телеграмма

Паянхи кун эпĕ хам тата манăн халăхсем Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхĕпе тата ăна çав тери лайăх ертсе пынипе савăнса, Совет Союзĕн халăхĕсемпе пĕрле пулаççĕ. Çавсене пула ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар, пирĕн пĕрлехи тăшмансене хирĕç кĕрешсе, хăйĕн çĕнтерĕвĕсемпе историе çĕнĕ страницăсем çырса хучĕ. Сталинграда çав тери вăйлăн хӳтĕлени пĕтĕм ĕçе урăх майлă çаврчĕ. Çавăн хыççăн хытăран та хытă пырса çапнине пула цивилизацие ирĕклĕхĕн тăшманĕсен хушшинче шикленӳ пуçланса кайрĕ. Эпĕ хам тата Британи империйĕн халăхĕ çав тери хавхаланнине палăртас шутпа, эпĕ хисеплĕ хĕç туса хатĕрлеме приказ патăм. Вăл хĕçе эпĕ пысăк савăнăçпа Сталинград хулине парне шутлатăп. Малашнехи телейлĕ кунсенче çак парне хула-воин хăйĕн тăшманĕсен вăйлă атакисене хирĕç çапăçса епле çирĕпленсе пынине тата патăрлăха аса илтерĕ. Вăл Британи империн халăхĕсем кăна мар, пĕтĕм цивилизациллĕ тĕнче савăнса тĕлĕннин символĕ пулса тăрать.

Георг.

Лондон, февралĕн 21-мĕшĕ, 1943 ç.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Великобритани королĕ VI Георг патне янă телеграмма

Хамăрăн пĕрлехи тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Хĕрлĕ Çар çитĕнĕвĕсене çав тери пысăка хурса хисеплесе послани янăшăн Сире, Сирĕн Величество, чĕререн тав тунине йышăнма ыйтатăп.

Британи халăхĕ Хĕрлĕ Çар пирки туслăхлă туйăмсене нумай палăртни пирĕн çĕршывсем хушшинчи боевой союз çирĕп пулнине пĕлтерет.

Сирĕн приказ тăрăх хисеплĕ хĕç туса, ăна Сталинград хулине парнелеме йышăнни çинчен эпĕ хулари влаçсене пĕлтертĕм. Сталинграда хӳтĕленĕ çĕрте пулнисем, Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăх пекех, çав хĕçе, паллах, тав тусах йышăнĕç. Вăл Великобританипе Совет Союзĕ хушшинчи хĕçпăшаллă тăванлăх символĕ пек шутланса тăрĕ.

Михаил Калинин.

Мускав, Кремль.
Февралĕн 21-мĕшĕ, 1943 ç.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшма чĕнет

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн 1943 çулти февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне сӳтсе-явнă май, республикăри мĕнпур предприятисемпе учрежденисенче ĕççыннисен нумай йышлă митингĕсем пулса иртеççĕ.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводра мĕнпур цехсемпе сменăсенче митингсем пулса иртнĕ. Кузнецов юлташ начальник пулса тăракан участок коллективĕнчи митингра стахановка Быстрова юлташ сăмах тухса каланă.

— Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ хăйĕн приказĕнче тăшман войскисене пырса çапассине вăйлатма приказ пачĕ,—тенĕ Быстрова юлташ хăйĕн сăмахĕнче. —Юратнă полководецăн приказне ответлесе, эпĕ малашне татах та лайăхрах ĕçлеме, нормăна кунсерен 170 процентран кая мар тултарма обязательство илетĕп

Гольдман юлташ начальник пулса тăракан цехăн хăшпĕр участокĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уява февраль уйăхĕнчи плана ăнăçлăн пурнăçланипе кĕтсе илнĕ. Цехри стахановецсем Живулин, Захарова, Буланова юлташсем ĕç нормисене яланах 200 процента яхăн пурнăçласа пынă.

Макаров юлташ начальник пулса тăракан цехăн рабочийĕсем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 25 çул тултарнă куна питех те кирлĕ заказсене срокчен пурнăçланипе паллă тунă. Стахановецсем Салтыков, Царапин юлташсем кулленех икĕ норма туса ĕçлеççĕ.

Бубис юлташ заведующи пулса тăракан мастерскойăн коллективĕ февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне уйăхри плана ирттерсе тултарнă. Мастерсем Дроздова, Батулина, стахановка Бузунова ĕç нормине яланах икĕ хут ытла ирттерсе тултараççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе пĕтĕм Совет халăхĕ савăнать. Хĕрлĕ Çара çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантаракан çак приказпа хĕçпăшалланса, рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем хамăрăн тăван çĕршыва ылханлă тăшманран ирĕке кăларас, фашистла нимĕç захватчикĕсене татăклăнах çĕнтерес тесе ниме те шеллемĕç.

Приказа сӳтсе-явас тĕлĕшпе пулса иртекен митингсемпе пухусенче заводсен, цехсен тата сменăсен коллективĕсем çĕршывпа фронт валли продукци ытларах кăларас тĕлĕшпе хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Вĕсем наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа, мĕнпур майсемпе пулăшма тăрăшаççĕ.

Предприятисенчи партиллĕ-политикăллă ĕçĕн ыйтăвĕсемпе пулса иртнĕ канашлу

Февралĕн 20 — 21-мĕшсенче ВКП(б) Обкомĕнче республикăри промышленность тата вăрман предприятийĕсенчи партиллĕ-политикăллă ĕçĕн ыйтăвĕсемпе промышленноçпа вăрман предприятийĕсенчи партбюросемпе партин пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта Канашри вагонсем юсакан заводри тата Улатăрти паровозсем юсакан заводри партбюро секретарĕсен Сорокинпа Шерстюк юлташсен тата Куславкка комбинатĕнчи партбюро секретарĕн Петрученко юлташăн докладне итлерĕç.

Сорокин юлташ хăйĕн сăмахĕнче пуринчен ытларах заводра нагляднăй агитаци ĕçне мĕнле туса пыни çинчен каларĕ. Наглязнăй агитаци социализмлă ăмăрту мĕнле пынине çутатса тăрас çĕрте пысăк вырăн йышăннине тата заводри парторганизаци ку тĕлĕшпе чылай паха опыт пухнине палăртрĕ.

Петрученко юлташ хăйĕн докладĕнче уйрăмах заводри парторганизаци цехра ĕçлекен агитаторсен ĕçĕпе вĕсене мĕнле ертсе пыни çинче чарăнса тăчĕ. Заводра,—терĕ вăл,—кашни уйăхрах агитаторсем валли семинарсем ирттеретпĕр, агитаторсене калаçусем иттермелли, хаçатсем çинчен çĕнĕ хыпарсем вуласа памалли материалсем пухса хатĕрлеме кăтартусем парса тăратпăр. Çак ĕçсене туса ирттернине заводри партбюро членĕсем контрольлесе тăраççĕ. Петрученко юлташ агитаципе пропаганда ĕçне партипе хуçалăх активĕ лайăх хутшăннине палăртрĕ.

Шерстюк юлташ канашлура заводри парторганизаци цехсенчи парторгсене ертсе пырас ĕçĕн опычĕ çинчен, парти пухăвĕсене мĕнле ирттерни çинчен, партие илни çинчен, комсомолпа ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

Докладчиксем, хăйсен завочĕсенчи партиллĕ-политикăллă ĕçĕн опычĕсене çутатса, çакна паллă турĕç: ку ĕçе производствăри задачăсене пурнăçлассипе, ĕç тухăçлăхне хăпартассипе, предприяти государство планĕсене тултарассипе тата ирттерсе тултарассипе таччăн çыхăнтарса туса пынă.

Пренире Талдыкин, Бельский, Полукаров, Крузман, Бриккер, Мазуренко юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем предприятисенчи партиллĕ-политикăллă ĕçри опытсемпе паллаштарса, ку ĕçри çитменлĕхсем çинчен чарăнса тăчĕç.

Канашлу вĕçленес умĕн ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ.

Чарыков юлташ чи малтанах промышленность предприятийĕсенчи парторганизацисен ĕç мелĕсем çинчен чарăнса тăчĕ, партбюросем цехсенчи парторганизацисене ертсе пырас тĕлĕшри тĕп çитменлĕхсене палăртрĕ, вĕсем ытларах заседанисенче ларса ирттерессине пĕтерменнине кăтартса пачĕ. Хăшпĕр чухне вăрăм решенисем йышăнаççĕ, вăл решенисем ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен бюровĕсем тата ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă решенисем майлах пулаççĕ. Партбюросен хăшпĕр секретарĕсен ертсе пырас ĕçре оперативлăхпа конкретлăх çук.

Чарыков юлташ малалла çакна палăртрĕ: партин предприятисенчи организацийĕсем производство техникине вĕренес тата ăна организацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çак ыйтусене тарăнăн тĕпчесе вĕренмеççĕ. Производствăна организацилес ĕçсен çĕнĕ ыйтăвĕсене вĕренес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, рационализаторла движение тивĕçлипе хак памаççĕ. Парти организацисем перекетлĕх режимне тытса пырассишĕн кĕрешес ĕçре пур майсемпе те усă курмаççĕ-ха, час-часах тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лараççĕ.

Чарыков юлташ комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче ĕçлес ыйтăва уйрăмах çивĕччĕн лартрĕ. Ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртса, вăл çав çитменлĕхсене çине тăрса пĕтермелли çинчен каларĕ. Чарыков юлташ комсомолăн предприятисенчи чылай организацийĕсем çителĕксĕр ӳсни, çамрăк рабочисен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатасси çине çителĕксĕр çаврăнса пăхни, общежитисенче ĕçлессине япăхтарса яни çинчен кăтартса пачĕ.

Предприятисенчи агитациллĕ-массăллă ĕç çинчен чарăнса тăрса, Чарыков юлташ парти организацисен руководителĕсене ку ĕçе тăван чĕлхепе туса пырасси çине уйрăмăнах çаврăнса пăхма хушрĕ. Ку çитменлĕхсене малашне текех тӳсме май çуккине асăрхаттарчĕ. Агитациллĕ-массăллă ĕçе çĕрлехи сменăсенче начар туса пыраççĕ.

Чарыков юлташ юлашкинчен парти организацийĕсен çӳлте асăннă çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тата партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăхлатассишĕн большевикла ĕçлемеллине кăтартса пачĕ.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе çĕнĕрен вăйлатрăмăр

СĔНТĔР. Паттăр Хĕрлĕ Çарăн пысăк çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса пирĕн „Хĕрлĕ Сормово" колхозри колхозниксем фронта пулăшассине вăйлатаççĕ. Колхозниксем халĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе çĕнĕ активлăхпа вăйлатса ячĕç.

Февралĕн 12-мĕшĕнче колхозăн бригадисенче пухусем пулса иртнĕ хыççăн колхозниксем ăшă тумтирсем пухса парассине вăйлатма йышăнна. Е. Смелов 2 тир, алшиш; К. Григорьева алшиш, чăлха, С. Соловьев 2 тир, чăлха, алшиш пачĕç, ытти колхозниксем те нумай япаласем пачĕç.

Колхоз Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çăматă йăвалама 18 килограмм çăм уйăрса хучĕ тата алшишсемпе чăлхасем çыхма уйрăм колхозницăсене çăм пачĕ. **И. Иванов.**

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти ретне илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелле

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче парти ретне куллен ӳстересси парти организацийĕсен чи хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать.

Партин Сĕнтĕр районĕнчи организацийĕ 1942 çулта ВКП(б) членне 21 çынна, ВКП(б) членĕн кандидатне 36 çынна илнĕ. Пĕтĕмпе çулталăк хушшинче парти ретне 57 çынна илнĕ. 1943 çулхи январĕнче тата февраль уйăхĕн малтанхи кунĕсенче ВКП(б) членне 6 çынна, ВКП(б) членĕн кандидатне 4 çынна илнĕ.

Парти ретне илнĕ юлташсем производствăра кăтартуллă ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче—ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Давыдова, чаплă комбайнер Питирнов юлташсем. Питирнов юлташ 1942 çулта комбайнпа тырă вырса пуçтарас плана 205 процент тултарнă.

Анчах партин районри чылай организацийĕсенче парти ретне илес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Партин райпотребсоюзри, пир-авăр фабрикинчи, Каршлăхри, ачасен санаторийĕнчи, госбанкпа перекет кассинчи пуçламĕш парторганизацисем пĕлтĕр те, кăçал та партие пĕр çынна та илмен.

ВКП(б) членĕн кандидачĕсем хушшинче куллен ĕçлесе пымаççĕ. Районри парторганизацинче 49 кандидат, вĕсенчен 18-шĕн кандидатра тăмалли срок иртнĕ.

Парти организацийĕсем комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсене çителĕксĕр пулăшса тăраççĕ. Çавăн пирки комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕсем саланса кайни те пулнă. Парти организацийĕсем комсомолецсене парти ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Пĕлтĕр 36 çынна парти членĕн кандидатне илнĕ пулсан, вĕсем хушшинче пĕтĕмпе те 19 комсомолец çеç.

Парти ретне илес ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле.

М. ИСАЕВ.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешер!

Çуракине хатĕрленес ыйту—ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн пленумĕнче

ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн пленумĕ комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес ĕçе мĕнле хутшăнни çинчен сӳтсе-яврĕ.

Докладчик — ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Томасов юлташ колхоз çамрăкĕсем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшни çинчен нумай тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ.

Упири „Янмурзино" колхоз Хĕрлĕ Çар XXV çул тултарнă уяв тĕлне çуракине пур енĕпе те хатĕрленсе çитнĕ. Ялти комсомолецсемпе çамрăксем (ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ С. Ильин) çуракине хатĕрленме колхоза активлăн пулăшнă. Яманакри „Красное Сормово", Упи ялсоветĕнчи „Коминтерн", Типçырмари „Пахарь" колхозсен çамрăкĕсем çуракине хатĕрленес ĕçсенче пуçарулăх кăтартаççĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Анчах Карай ялсоветĕнчи „Большевик" тата Войков ячĕпе тăракан, „Исаково" тата ытти хăшпĕр колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем çуракине хатĕрленес ĕçĕн тулашĕнче тăраççĕ-ха. Унти комсомолецсем колхоз производствине хутшăнмаççĕ.

Районри чылай колхозсем кĕрхи çĕртме планне тултарайман. Çакă вăл лашасене çуракине тухма хатĕрлес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлеме хушать. Мĕншĕн тесен çуракинче кашни лашапа сухаламалли çĕрĕн лаптăкĕ пысăк пулать. Комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсен хĕсĕр ĕнесемпе вăкăрсене ялхуçалăх ĕçĕсене тума вĕрентме тытăнмалла, лашапа мĕнле усă курнине тĕрĕслесе тăмалла.

Пленире 10 çын тухса каларĕç: Ильин („Янмурзино" колхозран), Н. Скворцов („Свобода" колхозран), М. Гурьева (Упири вăтам шкулран) юлташсем комсомолецсемпе шкул ачисем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшни çинчен чăрăнса тăчĕç.

— Шкулсенчи комсомолецсемпе çамрăксем колхозсене çуракине хатĕрленме çителĕксĕр пулăшаççĕ. Вĕсем çуллахи вăхăтра ялхуçалăх ĕçĕсене лайăхрах хутшăнса ĕçлетчĕç,—терĕ Гурьева юлташ.

Пленум районра тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас, запаслă пайсем пухас тата механизаторла кадрсем хатĕрлес ĕçсем сӳрĕккĕн пынине тата вăл çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелли мероприятисене палăртрĕ.

Р. Васильева.

Фронтовик ертсе пыракан колхозра

«Малалла» колхоз пысăк мар. Унта ĕçлеме пултаракансем пĕтĕмпе те 147 çын çеç. Виçĕ бригада. Арçынсенчен чылайăшĕсем фронтра. Çавăнпа пĕтĕм ĕç кунта хĕрарăмсен вăйĕпе пулса пырать.

Колхоз 1942 ялхуçалăх çулне лайăх вĕçлерĕ. Вăл уйри тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕрсе çапса пĕтерчĕ, выльăх фермисене комплектлесе, государство умĕнчи обязательствисене парса татнă.

Халĕ колхоз çуракине хатĕрленес ĕçе анлăн сарăлса кайрĕ. Колхозниксем, хуть те мĕнле çанталăк тăрсан та, тырпула кăçал вăхăтра акса [illegible].

— Паян ака, колхоз председателĕ Степан Осипович тул çутăлна çултиках Кăмашана кайрĕ. Унти «Волга» колхозран вăрлăхлăх [illegible] илме. «Малалла» колхозăн [illegible] çитмест, тен, тулăпа улăштарса илме май пулать, [illegible] шутлать. Вăйсĕр бригада бригадирĕ Иван Атрашкин хăйĕн колхозникĕсемпе [illegible] тытăнчĕ. Теприсем тата ирех тислĕк [illegible] пухса, уя [illegible] тытăнчĕ, хăвăрт хатĕрлеме [illegible].

63 çулти Петр Атрашкин охранник пулса ĕçлет. Çĕрлехи [illegible] ĕçрен килнĕ хыççăнах вăл [illegible].

[illegible]

не ирттерсе тултарнă,—тет счетовод.

Колхозница Надежда Абрамова çуллахи вăхăтра ача çуратрĕ пулин те 269 ĕçкунĕ, Надежда Майорова—222 ĕçкунĕ, 65 çулхи Денис Артемьев —311 ĕçкунĕ, 63 çулхи Петр Атрашкин 617 ĕçкунĕ тунă. [illegible]

«Малалла» колхоза отечественнăй вăрçă участникĕ Степан Осипович Долгов ертсе пырать. [illegible]

Колхозра ĕç дисциплини çирĕп. [illegible] закон пулса тăрать.

«Малалла» колхоз членĕсем пĕтĕм ĕçе тăван фронтовиксене [illegible]. [illegible] 476 килограмм тырă пачĕ, 200 килограмм аш-какай, 50-шер килограмм [illegible] пачĕç. Колхоз 1943 çулшăн государствăна [illegible].

Анчах колхоз председательне Долгов юлташа [illegible].

Х. Лисин.

Çемĕрле. (Хамăр корр.)

Ют çĕршывсенче

Лондонри митингра Иден тухса калани

«Çак эрнере, — терĕ Иден, — пирĕн союзник — СССР халăхĕ — хăйĕн паттăр çарне тунăранпа 25 çул тултарнине уявлать. Унăн величествин правительстви мана çак митингра сăмах тухса каласа, Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхне правительство ячĕпе тата пĕтĕм Англи халăхĕ ячĕпе тивĕçлипе хак пама хушрĕ. Нумай тата хăрушă каялла чакса пымалла пулнă уйăхсенче пирĕн пĕтĕм кăмăл вăйлăн, пĕр чарăнмасăр кĕрешекен çав çар сыннисен енче пулчĕ. Паян вĕсем, юлашкинчен, хăйсен вирлĕ кĕрешĕвĕн çимĕçне кураççĕ. Вĕсемпе пĕрле эпир те событисем улшăнса кайнипе, вĕсем пĕр чарăнмасăр çĕнтерӳллĕ наступлени туса пынипе савăнатпăр. Германи çарĕ хăйĕн пĕтĕм вăрăм историйĕнче те Сталинград патĕнче Хĕрлĕ Çартан тӳснĕ пек вăйлă поражени нихăçан та тӳсмен. Гитлера тата лайăхрах руководство, тата лайăхрах стратеги, тата лайăхрах кĕрешӳ çĕнтернĕ.

Пирĕн пĕрлехи тăшманăн каппайчăкла заявленийĕсене эпир манман, вырăс халăхĕ вĕсене нихăçан та манас çук. 1941-мĕш çулхи кĕркуннех пире Совет çарĕсене аркатса пĕтернĕ, тесе ĕнентерме хăтланчĕç. Пилĕк уйăх каярах кăна Гитлер нимĕç халăхне—манăн войскăсем Сталинграда илеççĕ, тесе сăмах пачĕ. Паянхи кун Совет Союзĕн çарĕсем Гитлерла Германин чи лайăх войскисем пĕр чĕрĕк миллион ытла пĕтнĕшĕн ответлă пулмалла турĕç. Гитлер пĕлмесĕр ертсе пынипе унăн çарне хăюллă та паттăр совет войскисем çапса аркатрĕç.

Виçĕ уйăх хушшинче Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулла нимĕçсем тытса илнĕ территорисене каялла тавăрчĕ кăна мар, çĕнĕ районсем те йышăнса илчĕ. Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çар нимĕç войскисене аркатма тата йĕркесĕр каялла тартма пултарассине те нимĕç халăхне ĕнентерчĕ. Пирĕн 8-мĕш арми те Роммеле çавнах кăтартнипе эпир те савăнатпăр. Вырăс патриотизмĕпе, вырăс халăхĕ тем тĕрлĕ йывăрлăха та тӳсме пултарнипе тата мітушка Российăн тем сарлакĕш çĕрĕсемпе тавлашса пăхни епле вилĕмле хăрушлăх патне илсе пынине, Наполеон çарĕ ăнланса илнĕ пекех, Гитлерăн пысăк çарĕ те ăнланса илчĕ.

Хĕрлĕ Çар уявĕн кунĕнче эпир унăн пĕтĕм руководствине, Сталин ертсе пыракан чаплă стратегиллĕ Верховный командованине, вăл стратегие фронтра çав тери ăнăçлăн пурнăçа кĕртекен генералсене, войскăсене паттăррăн та лайăх ертсе пыракан тĕрлĕ рангри офицерсене, ăнăçсăрлăхсем пулнă вăхăтра та çирĕп тăрса, çав тери хавхаланса наступление кайнă салтаксемпе унтер-офицерсене тивĕçлипе хакласа савăнатпăр. Сывлăшри Хĕрлĕ Флотăн хастарлă воинĕсене тата çыхăнупа снабжени йывăрлăхĕсене çĕнтерме пулăшакансене пурне те эпир тивĕçлипе хаклатпăр.

Çаксем çумне тепĕр мухтав хушма мана ирĕк пама ыйтатăп. Ку ĕнтĕ пирĕн шалти ĕç пулса тăрать. Эпĕ Англин королевски тата сутуилӳ флочĕн сыннисем çинчен калатăп. Вĕсем кирек хăш вăхăтра та, кирек епле çанталăкра та, çурçĕр çулĕн йывăрлăхĕсене парăнмасăр, пирĕн вырăс союзникĕсем патне тĕрлĕ çар материалĕсем турттараççĕ. Вăл сынсем Англи флочĕн паттăр традицийĕсене тивĕçлĕн упрарĕç.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн тăван çĕршывне ăнăçлăн хӳтĕленинче эпир агрессора хирĕç пĕрлешнĕ çĕршывсен триумфне куратпăр. Дюнкеркри событисем хыççăн тăшман пире парăнтарасшăн тапăннă вăхăтра пирĕн утравсем çинчи мĕнпур англичансен мĕнле шухăш-кăмăлсем пулнă, совет халăхĕ те çавăн пек шухăш кăмăлсемпех хавхаланнине куратпăр эпир. Анчах кунта эпĕ сире пĕр япала çинчен асăрхаттарса хăварасшăн: Халĕ ĕнтĕ Гитлерăн вăрçă руководстви арканса кайнă çĕрте Геббельсăн мĕнпур чеелĕхне ĕçе янă.

Союзниксем хушшинче хирĕçӳсем туртса кăларма, пĕрне-пĕри шанмалла мар тума тĕрлĕ тĕслĕ хăтланса пăхнă, хăтланаççĕ те. Пĕтĕм кивĕ ăпăр-тапăра çĕнĕрен туртса кăларнă. Çакăн пек пуканесен театрĕнче большевизмпа хăратасси паллă вырăн йышăнса тăрать. Анчах та пире çав тĕрлĕрен сăрласа пĕтернĕ кĕлеткене пĕлме йывăрах та мар. Вăл нацистла режимăн пирвайхи кунĕсенченех паллă пире. Вăл кĕлетке ăшĕнчен пăчкă кĕрпи сахал мар юхса тухрĕ, çавах та унпала каллех усă курма хăтланаççĕ.

Австрие тытса илнĕ чухне, Чехословакине çатса янă чухне, Польшăна хăратса тăнă чухне унпа Европăна хăратас тесе усă курчĕç. Польша,—уншăн ăна ĕмĕрлĕх тав— пăхăнмарĕ.

Халĕ ĕнтĕ çак хĕрлĕ хăрушлăх тенине тепĕр хут туртса кăларнă, анчах унпа пĕрле халь тепĕр сын пур. Гитлера Европăри цивилизацие çăлакан вырăнне хурса шутлама хушаççĕ пире. Вăл сыннăн 1943 çулта кăшт çитейменнисем пур. Вăл маскарада чăн вырăнне хурса йышăнма нейтральнăй çĕршывсенчи халăха та, оккупациленĕ çĕршывсенчи халăха та пĕр пекех йывăр пулĕ.

Цивилизацие çăлакан, теççĕ — мĕн тери мăшкăл! Çак ирсĕр вăрçăшăн Гитлер пĕртен-пĕр айăплă сын. 1940-мĕш çулхи нумай уйăхсем хушшинче, тата 1941 çулăн малтанхи уйăхĕсенче эпир Гитлера тĕнчере пуç пулса тăма кансĕрленĕ вăхăтра вăл пире чĕркуççи çине лартаймарĕ; çав Гитлер вара малтанхи уйăхсенче ним систермесĕр, формально ультиматум памасăр, Совет Союзне тапăнчĕ. Унччен икĕ çул та çук малтарах кăна Гитлер çав çĕршывпа туслă пурăнма пулнăччĕ. Гитлер, хăйĕн палачĕсемпе пĕрле çĕршер пин пĕр айăпсăр çынсене — чехсене, поляксене, грексене, норвежецсене, югославсене, голландецсене, бельгиецсене, французсене, вырăссене вĕлерсе пĕтернĕскер; Варшавăна, Роттердама, Белграда, Ковентрине тата темĕн чухлĕ вырăс хулисене аркатса тăкнăскер, «аслă раса» доктринин апостолĕ пулнăскер (çав доктрина тăрăх пĕтĕм тĕнче нимĕç господинĕшĕн чуралăха тата выçлăха кĕрсе ӳкмелле); хăйĕн çĕршывĕнче те ниепле законлăх та хăварманскер — çав Гитлер ĕнтĕ цивилизацие çăлакан рольне хăй çине илесшĕн. Çак этем цивилизацие çăлма пултарассин пĕртен-пĕр çул кăна пур, — вăл акă мĕнре: ăна хăех туса хунă нацистла тискер йĕркене пĕтĕмпех аркатса тăкиччене ертсе пыртармалла. Вăл Германи умĕнче тата пĕтĕм тĕнче умĕнче çав тери тискер те хăрушă монумент пулса тăтăр. Çав монумент вара çавăн йышши тепĕр фигура сиксе тухасран вăхăтра мерăсем йышăнмалли çинчен этемлĕхе яланах асăрхаттарса тăрĕ.

Германи пропагандинче юлашки тапхăрта тата тепĕр сасă илтĕнчĕ: «Тата пăртак тытăнса тăрăр, англосакссемпе вырăссем пĕр-пĕринчен хăйсемех уйăрăлĕç», теççĕ.

Эсир пĕлетĕр, вăл шанчăк ишĕлсе анчĕ. Иртнĕ çулхи май уйăхĕнче эпир кунта, Лондонра, Англипе Советсем хушшинчи союз çинчен калакан договор турăмăр. Тĕнĕл держависене хирĕç пыракан çак вăрçăра эпир вĕсене тĕппипех пĕтерес тĕлĕшпе кăна мар, эпир тата анлăрах принципсем тăрăх та килĕшӳ турăмăр. Вăл принципсем вăрçă хыççăнхи вăхăтри пирĕн туслăхăн принципĕн никĕсĕсем пулса тăраççĕ. Эпир вăрçă хыççăнхи система тăвас ыйту пирки калаçса татăлтăмăр. Вăл ĕнтĕ гитлерла «çĕнĕ йĕрке» тенине пĕтĕмпех хирĕçле пулать.

Гитлер тăшманĕсем чăннипех пĕрлешӳллĕ нацисем пулса тăраççĕ. Премьер-министр Сталин ноябрĕн 6-мĕшĕнче каланă хăйĕн сăмахĕнче Социализмлă Совет Республикисен Союзĕн ячĕпе Гитлера панă ответ пур. Господин Сталин вăл сăмахра Англи, Совет Союзĕ тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен коалицийĕ çинчен каланă. Идеологипе структура тĕрлĕрен пулсан та, вĕсем пĕрлехи тăшмана — Гитлера хирĕç пĕрлешсе кĕрешеççĕ.

Англи халăхĕ вăл программăна йышăнать. Англипе Совет Союзĕ хушшинчи договор икĕ çĕршыв хушшинчи çыхăнусенче пит паллă тапхăр шутланать, тесе Сталин каланине эпир пĕтĕмпех йышăнатпăр.

Хальхи вăхăтра Англипе Америка войскисем — Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшаллă юлташĕсем—авиацие тата çар флочĕ пулăшнипе Вăтаçĕр тинĕс хĕрринче çапăçаççĕ. Унта эпир тăшмана Европа континетне кăларса ыватса хыçран хăваласа пырасшăн. Тĕнĕл держависен войскисене тĕрлĕ япаласем туса тăратакан заводсемпе коммуникацисене союзниксен çарпа сывлăш вăйĕсем вăйлăран вăйлăрах çĕмĕрсе пыраççĕ.

Паян эпир Александр Невский вăхăтĕнче тевтон рыцарĕсене хирĕç, завоеватель пулас текен XII Карла хирĕç, император Наполеонăн аслă çарне хирĕç çапăçнă çарсен ĕçне малалла туса пыракан Хĕрлĕ Çара саламлатпăр. Эпир саламлатпăр, çав вăхăтрах тата шеллеме пĕлмен чи сутăнчăклă захватчика хирĕç кĕрешсе вилнисене шеллетпĕр.

Сталинград, Ростов, Харьков патĕнчи çĕнтерӳсем çав вилнисемшĕн хăйсен çĕршывне хӳтĕлесе чыслăн тавăраççĕ. Вĕсен çав тери паттăр та чаплă ĕçĕсене эпир саламлатпăр. Эпир пулас çĕнтерӳсем патнелле, татăклă çĕнтерӳ патнелле пыратпăр. Ăна эпир пĕрлешсе тăвăпăр».

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа ютçĕршывсенчи государство, çар тата общество деятелĕсем саламлани

Лăпкă океанăн Кăнтăр-Хĕвеланăç пайĕнчи союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен Главнокомандующийĕ генерал Мак Артур

Хĕрлĕ Çар уявĕ кирек епле нацири кашни салтакшăнах паллă событи пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар тунă çав тери пысăк çитĕнӳсем нумай енчен ку таранччен палăрнă пысăк çитĕнӳсенчен пит паллисем пулса тăраççĕ. Кашни воин туякан пахалăхсене — хăрушсăрлăха, тăван çĕршывшăн хăйне шеллеменнине, йывăр условисенче çирĕп пулнине тата чи йывăр вăхăт пирки ӳссе пыракан çирĕплĕхе Хĕрлĕ Çар палăртса парать. Çак тĕп пахалăхсем ĕнтĕ воинăн вилĕмсĕр чапĕн никĕсĕ пулса тăраççĕ.

Хăйĕн тивĕçлĕ кĕрешĕвĕнче тĕппипех çĕнтерме Хĕрлĕ Çара турă пулăштăр.

США государственный секретарĕ Хэлл

Ыран Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарать. Вăл 1941-мĕш çулхи июньрен пуçласа нацистсем хытă пырса тапăннине хирĕç ăнăçлăн кĕрешет. Çак иртнĕ тапхăрта Совет правительствипе СССР-ти халăхсем нациллĕ самооборона ĕçĕнче епле çитĕнӳсем тунине захватчиксем хăйсен ĕнсисем çинче тӳссе курма пултарчĕç. Паттăр Хĕрлĕ Çар, Российăри пĕтĕм халăх вирлĕн пулăшса тăнипе, нацистла Германин легионĕсене каялла ывăтса ячĕ. Сталинградшăн пынă паттăр çапăçу, захватчиксене пĕтĕмпех аркатса тăкнипе вĕçленнĕскер, пирĕн асра тăрать. Ку вăрçăра, историри пекех, агрессорсем пĕтĕм тĕнчене çавăрса илес тесе ĕмĕтленнисем пирвайхи хут çеç мар паттăр халăхсен вăйĕ çине пырса çапăнса арканса каяççĕ. Совет халăхĕ паян хăйĕн армийĕсемшĕн савăннине эпир ăнланатпăр, хăйĕн хĕçпăшалне чапа кăларнă ăнăçусем ӳснĕçемĕн ӳссе пынă пирки эпир унпа пĕрле савăнатпăр.

* * *

Кунсăр пуçне тата çаксем саламсем янă: США çĕрĕç министрĕ Викард, производствăллă профсоюзсен Конгресĕн председателĕн заместителĕ — автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюз председателĕ Томас, паллă полярнăй исследователь адмирал Берд, журналист Уолтер Липман, моряксен профсоюзĕн председателĕ Керрен;

Канада премьер-министрĕ Маккензи Кинг, нациллĕ оборона министрĕ Ралстон, авиаци министрĕ Пауэр, тинĕс флочĕн министрĕ Макдональд, Тинĕс-Çар флочĕн штабĕн начальникĕ вице-адмирал Перси Неллес;

Австралин ютçĕршывсен министрĕ доктор Эватт, металлурги промышленноçĕнчи рабочисен профсоюз председателĕ Мак-Генри, Австралири пĕрлешӳллĕ партин лидерĕ Юз;

Англири наука деятелĕсен ассоциацин председателĕ сер Ричард Грегори т. ыт. те.

Кроса хутшăнмасăр юлмалла мар

ВАРМАР. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пуçланнă кроса февралĕн 21-мĕш тĕлне 2.565 çын хутшăннă. Вĕсенчен 2.243 çын ГТО тата БГТО значокĕн нормисене панă.

Вăрмарти, Шăхальти вăтам шкулсем, ФЗО шкулĕн коллективĕсем кроса аван хатĕрленсе малти вырăнсене йышăнчĕç. Çапах та районри хăшпĕр организацисем халĕ те кроса хутшăнман-ха. Кив Мăратри, районри финанс отделĕн, Уполнаркомзаг коллективĕсем кроса хатĕрленес енĕпе нимĕн те туман. Комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕсен хăйсен организацийĕсене кроса хутшăнтарас пирки тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

И. Залевский, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

ГТО тата БГТО нормисене 2.014 çамрăк пачĕç

КАЛИНИНО. Профсоюз членĕсем, комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса пурĕ 2.896 çын хутшăнчĕç. Малтанхи пилĕк кун хушшинче вĕсенчен ГТО тата БГТО значокĕсен нормисене 2.014 çын пачĕç.

Чăрăш Шĕнерти çар ĕçне вĕрентекен пунктра вĕренекенсем лайăх результатсем кăтартрĕç. Гордей Блинов вунă километра 52 минутăра, Павел Тимофеев — 54 минутăра, Геннадий Кудрявцев — 58 минутăра чупса тухрĕç.

В. Горшков.

Кросс ирттерчĕç

КАЛИНИНО. Педагогика училищинче вĕренекен ачасемпе служащисем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа иртнĕ йĕлтĕрлĕ кроса активлăн хутшăнчĕç. И. Егоров, Г. Степанов, Т. Филиппов вĕренекенсем 10 километрлă дистанцине 65 минутăра тухас вырăнне 62 минутăра чупса тухрĕç. А. Архангельская, Игнатьева, Р. Вязовкина, Е. Никонорова вĕренекенсем 3 километра 22 минутăра чупса тухас вырăнне 17 минута çурăра чупса тухса малти вырăна йышăнчĕç. Çавăн пекех Р. Морякова, П. Скворцов вĕренекенсем те 2 километрлă дистанцине 18 минутăра тухас вырăнне 13 минутăра чупса тухрĕç.

А. Филиппов.

Çитес вăхăтра тумалли калаçусен тата лекцисемпе докладсен темисем

1. Большевиксен партийĕ — нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн организаторĕ.
2. Пирĕн Кăнтăрти çĕнтерӳсем.
3. Хальхи тапхăр тата пирĕн задачăсем.
4. Колхозсен Верховный Главнокомандующи Сталин юлташăн 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказĕнчен тухса тăракан задачисем.
5. Чăваш халăхĕ совет халăхĕн Отечественнăй вăрçинче.
6. Гитлеровецсем совет халăхне мĕн кӳреççĕ.
7. Чăваш халăхĕн геройлă аваллăхĕ.
8. Чăваш халăхĕпе вырăс халăхĕн историллĕ çирĕп туслăхĕ.
9. Совет Союзĕнчи халăхсен сталинла туслăхĕ—тăшмана çĕнтерессин никĕсĕ.
10. Чăваш АССР-ĕ совет влаçĕ вăхăтĕнче экономика енчен аталанса ӳссе пыни.
11. Чăваш халăхĕн культурипе литератури чечекленсе ӳссе кайни ленинла-сталинла наци политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пынин результачĕ.
12. Революциллĕ сыхлăх çинчен.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Касса ил те усра

Республикăри радиоузелсене, пĕрле пухăнса итлес ĕçе организацилекенсене пĕлсе тăма

Чăвашсен радио саракан РВ—74 станцийĕ (943 метр:ă хум çинче) мартăн 1-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕ расписанипе ĕçлеме тытăнать.

Кашни кун (вырăнти вăхăтпа):

7 сех. 35 мин. — 7 сех. 59 мин. Юлашки хыпарсем (чăвашла тата вырăсла)
8 сех. 00 мин. — 8 сех. 14 мин. Мускавран параççĕ.
8 сех. 15 мин. — 8 сех. 24 мин. „Красная Чувашия" хаçатăн умстатьи (эрнере 3 хут) „Чăваш Коммуни" хаçатăн умстатьи (эрнере 3 хут).
Тунтикун — политикăллă калаçу.
8 сех. 25 мин. — 8 сех. 34 мин. Мускавран параççĕ.
8 сех. 35 мин. — 8 сех. 41 мин. Совет Информаци Бюровĕн каçхи пĕлтерĕвĕ (чăвашла).
13 сех. 00 мин. — 13 сех. 19 мин. Мускавран параççĕ.
13 сех. 20 мин. — 13 сех. 29 мин. Политикăллă калаçу.
17 сех. 30 мин. — 17 сех. 44 мин. Ялхуçалăх передачи.
17 сех. 45 мин. — 17 сех. 59 мин. Совет Информаци Бюровĕн ирхинехи пĕлтерĕвĕ, ТАСС пĕлтерĕвĕсем (чăвашла).
18 сех. 00 мин. — 18 сех. 14 мин. Литературăпа музыка передачи (ытларикун, эрнекун).
18 сех. 15 мин. — 18 сех. 20 мин. Информацисемпе пĕлтерӳсем.
18 сех. 50 мин. — 19 сех. 19 мин. Вырсарникун—концерт.

Республикăри пур районсем валли те районпа хулана передача памалли вăхăт 19 сех. те 40 минутăран пуçласа 19 сех. те 59 минутчченех пулать.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Радиокомитет.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 089 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.